# РАЧИЯ ОВАНЕСЯН

*Армени*

## РОССИЯ

Çывхарчĕ тăван çĕр, тĕтре сирĕлет,
„Россия“ карап кастарать хумсене.
Хумсем илсе кайрĕç таçта инçелле
Çĕршывсăр эрмен çыннисен куççульне.

Босфор тĕлĕнче, çăлтăрсем тинĕсе
Ӳксе çутатсан, карапри эрменсен
Шăпах хĕр çуралчĕ — „Россия“ тесе
Карап ячĕпе ăна чĕнчĕç вĕсем.

Батуми. Портра алхасать çуркунне.
Пире пур хула чĕререн хапăллать.
Россия — тем анлăш çĕршыв — хăй хĕрне,
Çав пĕчĕк Россия-хĕре, тĕл пулать.

Ик талăк кăна пурăнать-ха этем —
Телейлĕ çĕршывăн телейлĕ çынни;
Анчах уншăн вăл — çак хавас сасăсем,
Карап шăнкăравĕ, çынсем савăнни...

Çав вăхăтранпа иртрĕ çул самаях.
„Хăш çĕр хĕрачан тăван çĕрĕ?“ тесен, —
Раснах мухтанса, килтисем пĕрмаях
„Россия!“ тесе таврăççĕ кĕскен.

1950